25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
3
ЭРНЕКУН
153(6088) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Фронта пулăшасси— кашни кун, кашни сехетре тумалли ĕç

Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн вунă кун иртсен, 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче, Сталин юлташ радио тăрăх историллĕ сăмах тухса каларĕ. Çулпуçăн кĕрÿллĕ сăмахĕ пирĕн халăхăн чĕрине çирĕп шанчăкпах кĕртсе хавхалантарчĕ, çĕнтерÿ тăвас кăмăла çĕклерĕ, çав çĕнтерÿ патне пымалли çула кăтартса пачĕ.

«Иккĕленÿ пулма пултараймасть, Германия вăрçă тĕлĕшпе кĕске вăхăтлăха тунă çак ăнăçу эпизод çеç пулса тăрать, ССР Союзĕ политика тĕлĕшпе тунă питех те пысăк ăнăçу вара пысăк вырăнта тăракан тата нумай вăхăта пыракан фактор пулса тăрать; çак фактор никĕсĕ çинче фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн вăрçă ĕçĕсенче татăклă çитĕнÿсем пулса пымалла», терĕ Сталин юлташ ун чухне хăйĕн сăмахĕнче.

Унтанпа шăпах пĕр çулталăк иртрĕ. Вăрçăн çулталăкри итогĕсем Сталин юлташăн çак сăмахĕсене пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе пачĕç. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар малтанхи вăхăтсенче активлă оборона туса пырса, тăшмана чĕрĕ вăй енĕпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем тÿсме тÿстерчĕ. Тăшманăн броньăпа витĕннĕ войскисене вăйлăн пыра-пыра çапса хавшатрĕ, унтан вара хăй наступлени тума тытăнчĕ.

Сталин юлташ хăй ертсе пынипе пирĕн çĕршыв пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Фронтпа тыл пĕтĕçсе, хăйсен пĕтĕм вăйне тăшмана хирĕç çĕклерĕç. Иртнĕ вăхăт хушшинче Хĕрлĕ Çар пиншер ялсемпе вуншар хуласене нимĕç бандичĕсен ирсĕр пусмăрĕнчен хăтарчĕ, çĕршер пин совет çыннисен пурнăçне çăлса хăварчĕ. Совет Союзне «çиçĕм пек хăвăрт» çĕнтерме шутласа гитлерла командованипе гитлерла пуçлăхсем туса хунă плансем пĕтĕмĕшпех путланса ларчĕç. Сталин юлташ малтанах пĕлсе тăрса каланă пек, гитлерла Германие хирĕç кĕрешме пĕтĕм тĕнчери вирĕ аслă державă пĕрлешрĕç.

Иртнĕ çулти июлĕн 3-мĕшĕнче каланă сăмахра Сталин юлташ пирĕн умма пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Кун хыççăн каланă сăмахсемпе приказсенче Сталин юлташ вăл задачăсем çинчен тепĕр хут аса илтерчĕ.

«Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăрăн пĕтĕм ĕçе çав ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăлармалла», терĕ вăл.

Чăнах та, Сталин юлташ лартнă задачăна пурнăçлама рабочисемпе колхозниксем пĕтĕм хастарлăхпа тытăнчĕç. Фронт ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем илсе тăчĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ дивизисем Хĕрлĕ Çара пулăшма фронта пырса тăчĕç. Сталин юлташ сăмахĕн хăватлă вăйĕ тăшмана хирĕç кĕрешме пĕтĕм çĕршыва çĕклерĕ.

Фронта пулăшас тĕлĕшпе пирĕн республикăри ĕççыннисем те начар мар ĕçлерĕç. Çĕршывăн оборона фондне вуншар пин тенкĕ укçа, государство заемĕсен облигацийĕсем, хаклă япаласем, пиншер пăт тырпул, пахча-çимĕçсем, ашкакай хывнă. Пирĕн предприятисем вăрçă валли ĕçлесе плана ытлашшипех тултарма тытăнчĕç. Эпир Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем нумай пухса патăмăр, бронепоезд туса парса фронта пулăшрăмăр.

Анчах тунă çитĕнÿсем пире лăпланса ларма ирĕк памаççĕ. Фронта пулăшасси — кашни кун, кашни сехетре тумалли ĕç пулса тăрать. Çакна яланах асра тытас пулать.

Юлашки вăхăтра хăшпĕр районсенче ку енĕпе ĕçе сÿрĕклетрĕç темелле. Тĕслĕхрен Красноармейски, Октябрьски районĕсене илме пулать. Кунта юлашки вăхăтра çĕршыв оборонин фондне ÿстерсе пырас, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас енĕпе çитенлĕхсĕр ĕçлеççĕ. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума та Красноармейски район 12.000 тенкĕ ытларах çеç пухнă.

Партипе совет вырăнти организацийĕсен çак ĕçе вăйлатас пулать. Фронта пулăшассинчен, çĕнтерÿ тума мĕн кирлине пурне те туса пырассинчен пысăкрах задача халĕ урăх пулма та пултараймасть. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя хумалла. Çавăнпа та парти организацийĕсен агитациллĕ-массăллă ĕçе пĕрмай вăйлатса пымалла. Фронтри хамăрăн паттăр земляксен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа парса, вĕсем пек паттăррăн, вĕсем пек пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме ĕççыннисене мобилизацилемелле.

—o—

Утă çулма тухрĕç

ШАХАСАН, июнĕн 1-мĕш. (Телефонпа). Çĕнĕ Пинерти «Пинер» колхозăн колхозникĕсем июнĕн 28-мĕшĕнче утă çулма тухрĕç. Колхозниксем ĕçе пĕрпĕрнипе ăмăртса туса пыраççĕ. Утта хăвăрт та тирпейлĕ пуçтарса кĕме тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 1-мĕшĕнче Курск енче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире янă. Хăшпĕр участоксенче танксен пысăк соединенийĕсен çапăçăвĕсем пулса иртнĕ. Çав çапăçусенче противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿснĕ.

Фронтăн Севастополь участокĕнче противник, питех те пысăк çухатусем тÿссе, малалла куçма пултарнă. Боецсем штык вĕççĕн тăрса питĕ хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 136 танкне, войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 236 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине тата зенитнăй пулеметсен 30 точкине пусарса лартнă, чугунçул çинчи пĕр состава çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Курск енче кунĕпех танксен вăйлă çапăçăвĕсем пулса пынă. Пысăк çухатусем тÿснине кура, противник çапăçăва хăйĕн çĕнĕ резервĕсене кĕртсе янă. Пирĕн танкистсем, артиллеристсем, летчиксем тата пехотинецсем гитлеровецсен танковăй тата пехотнăй чăсĕсене ăнăçлăн аркатса пыраççĕ. Павелкин юлташ командир пулса ертсе пыракан танкистсем нимĕçсен темиçе вуншар танкĕсене пĕтерсе тăкнă. Пирĕн штурмовиксем, çĕр çинче çапăçакан чăссене пулăшса пырса, пĕр кун хушшинче нумай танка, 130 автомашинăна, 15 зенитнăй орудие тата противник пехотин 2 батальонне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противник, ытла та пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăр, Севастополе çаплах хаяррăн штурмлать. Хулана хÿтĕлекен мухтавлă боецсем гитлеровецсен йышлăрах вăйĕсене хирĕç хăйсене шеллемесĕр çапăçаççĕ. Нимĕçсем Гусаров юлташ командир пулса тăракан чăсĕн подразделенийĕ хÿтĕлекен позицие кунĕпе 20 хутчен атакăланă. Çапăçу кирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен çĕршер вилли выртса юлнă. Запрошенко юлташ командир пулса тăракан подразделенин ротинчи боецсем пирĕн тыла сăрхăнса кĕрсе кайнă нимĕçсене аркатса тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна ытла вĕлернĕ. Тепĕр участокра ротăн политрук заместителĕ Кусрашвилли юлташ, пулемет расчечĕпе пĕрле çапăçса, 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гвардеец-минометчиксем (Калинин фрончĕ) нимĕçсен 7 пулеметнăй точкине, боеприпассем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă тата 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

* * *

Старши лейтенант Василенко командир пулса ертсе пыракан боец-разведчиксен ушкăнĕ пралук карта урлă каçса белофинсен траншейисене çĕмĕрсе кĕнĕ. Красноармеецсем Поваленко, Худоман, Крынский юлташсем тата ыттисем те 15 белофина пĕтерсе тăкнă тата 3 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен чугунçул управленийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Антон М. çапла каласа панă: «...Лайăх хĕçпăшалланнă партизансем нумаях пулмасть Жолынец станцийĕ çине пырса тапăннă. Вĕсем çав станцин хуралне тата станцие сыхлама янă салтаксене пере-пере вĕлернĕ. Эпĕ тыткăна парăнтăм. Мана штаба илсе кайрĕç, унтан вара самолет çине лартса фронт урлă илсе каçрĕç. Вырăс летчикĕсем йывăр бомбардировщиксемпе кашни çĕрех чугунçул узелĕсем çине вĕçе-вĕçе пырса тапăнаççĕ. Вĕсем Десна шывĕ урлă хывнă кĕпере çĕмĕрме пултарчĕç. Нимĕç салтакĕсем нумайĕшĕ Российăна хирĕç туса пыракан вăрçа ăссăр-тĕлсĕр тата шанчăксăр вăрçă тесе шутлаççĕ».

* * *

Нимĕçсен вĕлернĕ унтер-офицерĕ Леопольд Фогель çумĕнче унăн арăмĕ патне ярса ĕлкĕреймен çырăвне тупнă. Вăл çырура çапла каланă: «... Ĕнен, эпĕ 5 уйăх хушшинче тамăкри пек мĕнпур асапсене чăтса ирттертĕм... Ĕнер пирĕн батальон чи йывăр куна пурăнса ирттерчĕ. Ку вăл чăн-чăн катастрофа пулса тăчĕ. Пĕр пĕчĕк ял патĕнче эпир 250 çын çухатрăмăр. Темĕнле хăвата пула анчах эпĕ чĕрĕ юлтăм. Вырăссем усалтарах та хаяртарах пулса пыраççĕ. Эсĕ пĕлетĕн ĕнтĕ, эпĕ хăравçă çын мар, анчах, ĕнен, çапăçура вырăссене курсанах сехĕре хăпса тухать. Вĕсен куçĕнче çавтери пысăк курайманлăхпа хастарлăх курăнса тăрать. Çавăн пек çынсем вĕсем парăнмаççĕ, тыткăна лекмеççĕ»...

* * *

Оккупациленĕ совет районĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хресченсенчен çĕре тытса илеççĕ те ăна нимĕç колонисчĕсемпе помещикĕсене параççĕ. Ленинград облаçĕнчи Надбелье ялĕнче гитлеровецсем колхозниксенчен пахча тума 40 гектар чи лайăх çĕре туртса илнĕ те ăна пĕр нимĕçе панă. Çав çĕре хресченсене ĕçлеттернĕ, ĕçшĕн нимĕн те тÿлемен. Лунски районри Володарский ячĕпе тăракан совхоза Германирен барон фон-Бильдерлинг килнĕ. Çĕнĕрен килнĕ помещик таврари ялсенчен хресченсене пухнă та вĕсене çапла каланă: совхозăн çĕрĕпе пурлăхĕ манăн харпăрлăх пулать, тенĕ. Вăл хресченсене хăйĕн именийĕнче пĕр укçасăр ĕçлеме хушнă. Анчах çав баронăн вырăс çĕрĕ çинче нумай хуçаланса тăма май килмен. Ăна партизансем вĕлернĕ.

* * *

Машиностроительсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне пуçарса яракан заводăн, станоксем тăвакан «Красный пролетарий» заводăн коллективĕ производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Иккĕмĕш кварталра вăл планран ирттерсе 137 станок туса кăларнă.

Июлĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Курск тата Севастополь енĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Курск енче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире янă, противника пысăк çухатусем кÿнĕ. Пухов юлташ командир пулса ертсе пыракан чăсĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 39 танкĕпе бронемашинине, 64 минометне, 24 орудине, 6 автомашинине тата боеприпассем тиенĕ 36 лавне пĕтерсе тăкнă. Çав участокра противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 7.000 çынна çити вилнĕ. Красноармеецсемпе командирсем гитлеровецсене хирĕç пыракан çапăçусенче питех те пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Кĕçĕн лейтенант Сорокинăн минометчикĕсен минисем пĕтсе çитсен, боецсем нимĕçсене винтовкăсенчен пеме пуçланă. Кĕçĕн лейтенант Сорокин 25 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, красноармеецсем: Леус юлташ — 35 гитлеровеца, Гасанов юлташ — 30 гитлеровеца ытла, кĕçĕн лейтенант Паршин пулеметран персе 30 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Пантелеевăн артиллери батарейине нимĕçсен 20 самолечĕ хаяррăн атакăланă. Ун хыççăн противникăн пехоти наступлени тума тытăннă. Пирĕн артиллеристсем тăшмана хăюллăн кĕтсе илнĕ. Тÿррĕн персе, вĕсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Курск енче пирĕн авиаци ăнăçлăн кĕрешет. Пĕр кун хушшинче вăл нимĕçсен 28 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Севастополе хÿтĕлекенсем ĕмĕр манми чапа тухрĕç. Вĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен совет çĕрĕн кашни пусăмне çирĕппĕн те хастарлăн хÿтĕлеççĕ. Противник пысăк вăй пухса Торбун юлташăн подразделенийĕ йышăнса тăракан участока атакăланă. Пирĕн боецсем, контратака туса, гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенантăн Меченкон миномет батарейи противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Краснофлотецсем Киселев, Новицкий тата Корван нимĕçсен йывăр танкне çĕмĕрнĕ. Танксене хирĕç пемелли туппăн командирĕ Джамаш юлташ нимĕçсен «Хейншель-126» йышши самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Пузыревский юлташăн мотострелковăй подразделенийĕнчи боецсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) икĕ кун хушшинче противникăн йышлăрах вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Вилнисемпе аманнисене 1000 çынна çити çухатсан нимĕçсем хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакса кайнă.

* * *

Пирĕн пĕр чăсăн разведка тăвакан ушкăнĕ (Кăнтăр фрончĕ) противникăн 268 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 8 пулемет тытса илнĕ тата темиçе салтака тыткăна илнĕ.

* * *

Клещев юлташăн чăсĕнчи 6 летчик истребитель сывлăшри çапăçура нимĕçсен 6 бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Д. юлташ ертсе пыракан отрячĕ çак кунсенче противникăн самолетсем лармалли площадки çине пырса тапăннă. Партизансем площадкăн хуралне пере-пере вĕлернĕ те нимĕçсен разведка тăвакан 2 самолетне çунтарса янă.

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен О. юлташ ертсе пыракан отрячĕ икĕ уйăх хушшинче нимĕç оккупанчĕсене 1000 çынна çити вĕлернĕ, 16 лав, 37 автомашина пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата противникăн 8 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче партизансем винтовкăсем, пулеметсем, миномет тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç обер-ефрейторĕ Пауль Кремд нумаях пулмасть Могилевран унтер-офицер Густав Кнорр патне çакăн пек çырнă: «Çар тĕрмине кашни кунах арестленĕ çĕнĕ ушкăнсене илсе пыраççĕ. Пур камерăсем те лăк тулли. Паян, эпĕ дежурнăй пулнă чухне, чаçран тарса кайнă фельдфебеле илсе пычĕç. Франције хирĕç вăрçнă чухне эпир унпа пĕр ротăра пулнă. Вăл хăйне хăй питĕ ирĕклĕн тытса, кулкаласа, çапла каларĕ: «Лайăхрах хваттерсем хатĕрлесе хурăр, сирĕн пата пополнени килет. Çапăçса халран кайнă салтаксем канма тĕрмене килеççĕ», терĕ. Выросар никун ыран тенĕ чух çĕрле тĕрмерен 5 дезертир тарса кайнă, вĕсене асаплантарса вĕлермелле тунă пулнă... Кунта питех те канăçсăр. Кашни кунах автомобильсем, лавсем, лашасем çухалаççĕ. Ĕнер икĕ «Мерседеса» вăрланă, нумаях пулмасть такам штабăн машинине илсе кайнă... Вырăнти халăх пире кураймасть».

* * *

Соданкуль патĕнчи вăрмансенче (Финляндия) финсен фронтран тарса кайнă салтакĕсен хĕçпăшаллă ушкăнĕсем пытанса çÿреççĕ. Çав салтаксем хăйсене хăйсем «эпир вăрманти гвардии» тесе çÿреççĕ. Вĕсем нумаях пулмасть шюцкоровецсемпе нимĕç салтакĕсен отрядне тапăннă. Пуçланса кайнă тытăçура 18 нимĕçе тата 5 шюцкоровеца вĕлернĕ. Нумаях пулмасть «Вăрманти гвардин» пĕр ушкăнĕ Соданкуль хулине пырса кĕнĕ те нимĕçсен 2 офицерне хăйсемпе пĕрле вăрмана илсе кайнă.

* * *

Кисурин юлташ директор пулса тăракан завода фронт сывăхĕнчи тăрăхран инçетри тыла куçарса кайнă. Çĕнĕ вырăнта çав заводăн коллективĕ боеприпассем ĕлĕкхинчен икĕ хут ытларах туса кăларса тăрать. Июньри плана завод срокчен 7 кун малтан тултарнă.

Нимĕçсен пысăк çухатăвĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Кĕтмен çĕртен пырса çапса нимĕçсем хăйсем нумаях пулмасть çухатнă рубежа каялла туртса илме хăтланса пăхрĕç. Тул çуталас умĕн гитлеровецсем артиллерипе минометсенчен вăйлăн пеме пуçларĕç. Сывлăшра тăшманăн темиçе самолечĕ курăнса кайрĕ. Вĕсене пирĕн зенитчиксем тата пехотинецсем персе хăваласа ячĕç. Часах нимĕçсен танкĕсем курăнса кайрĕç, вĕсем хыççăн пехота тапăнса килчĕ.

Гитлеровецсем пирĕн флангсенчен иртсе кайса, çиçĕм пек хăвăрт çапса ăнăçу тума шутларĕç. Хăйсем чылай йышлăрах пулнипе усă курса, нимĕçсем пирĕн сулахай фланга кăштах хĕсме пултарчĕç. Анчах оборонăн вăта çĕрĕнче вĕсем гвардеецсен вăйлă оборони çине пырса тăрăнчĕç, салтаксемпе офицерсене 300 çынна ытла çухатса, пĕр вырăнта чарăнса тăчĕç.

Сулахай флангра противника хирĕç хаяр çапăçу пулса пычĕ. Сылтăм флангра нимĕçсен малти чăсĕсене каялла хăваласа ячĕç. Тăшман резервсем илсе пычĕ. Пирĕн командовани противника фланграң пырса çапма решени йышăнчĕ. Çак маневр ăнăçлă пулчĕ. Гитлеровецсем пăтрашса кайса каялла чакма тытăнчĕç, вĕсене пирĕн танксемпе авиаци хăваласа пычĕ.

Противник каллех резервсем илсе пырса çапăçăва татах 6 танк кĕртсе ячĕ. Çапăçу çĕнĕ вăйпа пуçланса кайрĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн атакисене сире-сире ярса, штык вĕççĕн çапăçма тытăнчĕç. Çапăçу 14 сехет ытла пычĕ. Артиллерипе, танксемпе тата самолетсемпе лайăх сыхăнса кĕрешсе, пирĕн пехота нимĕçсем çине ыткăнчĕ. Гитлерла чăссем васкасах чакма пуçларĕç. Фашистсен 2.000 çын ытла вилсе тата аманса юлчĕç. Тыткăна илнисем пур, вĕсем хушшинче темиçе офицер. Çĕршер винтовка, вуншар пулеметсем, автоматсем, радиостанцисем тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

— Эпир наступление каясшăн пулмарăмăр,—тесе каласа параççĕ тыткăна лекнисем.—Пире ÿсĕрĕлсе кайиччен ĕçтерчĕç, офицерсем пире пăшалпа хăратса пычĕç. Эпир сирĕн листовкăсене вуланă, Россия Англипе союз тунине тата Америкăпа килĕшÿ тунине пĕлетпĕр. Пирĕн тăвансем тылран питĕ салхуллă çырусем çыраççĕ. Çак вăрçăра Германия çĕнтерес çуккине эпир курса ĕнентĕмĕр.

Британирен çар хатĕрĕсем тăратас ĕç валли укçа-тенкĕ парас тĕлĕшпе ССР Союзĕпе Великобритани хушшинче тунă Килĕшÿ

1942 çулти июнĕн 27-мĕшĕнче Мускав хулинче Британи Правительстви Совет Правительствине çар хатĕрĕсем тăратас ĕç валли тата вăрçăра паракан ытти тĕрлĕ пулăшу валли укçа-тенкĕ парас тĕлĕшпе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Великобританин Пĕрлешÿллĕ Королевствин тата Çурçĕр Ирландин Правительствисем хушшинче тунă Килĕшĕве алă пуснă.

Совет Союзĕ енчен Килĕшÿ çине — ССР Союзĕн Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян юлташ, Британи енчен — Великобританин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ г-н А. Керр алă пуснă.

Çав Килĕшĕвĕн условийĕсем тăрăх Британи Правительстви Совет Правительствине çар хатĕрĕсем тата вăрçăра ытти тĕрлĕ пулăшу пама килĕшет, çакăнпа пĕрлех Великобританире е Британин доминионĕсемпе колонийĕсенче туса хатĕрленĕ хĕçпăшал таврашне Совет Союзне тÿлевсĕр пама килĕшнĕ. Çакна май Британирен Совет Союзне çар хатĕрĕсем тăратас ĕçе малашне татах та ытларах лайăхлатма палăртнă.

Килĕшÿре çакна кăтартса панă: Совет Правительстви пĕр енĕ тепĕр енне паракан кирек мĕнле пулăшу та хирĕ-хирĕç пулса пытăр тесе тăрăшать. Килĕшĕвĕн постановленийĕсем вăхăт тĕлĕшĕнчен каялла куçса вăй илеççĕ, вĕсем вара 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа ĕçе кĕнĕ тесе шутланаççĕ.

Çак Килĕшÿ Британирен чĕр тавар тата ытти тĕрлĕ пĕтĕмĕшлĕ оборудовани тăратнăшăн укçа тÿлессине пырса тивмест. Çакă паллă: чĕр таварпа ытти тĕрлĕ пĕтĕмĕшлĕ оборудовани тăратнăшăн укçа тÿлесси пĕр-пĕрне таварсем тăратас, кивçен парас тата вĕсемшĕн тÿлемелли йĕрке тăвас тĕлĕшпе 1941 çулти августăн 16-мĕшĕнче алă пуснă килĕшÿ тăрăх пулса пырать; çакă вăл Совет Союзне Англи таварĕсене тăратассине те, çавăн пекех Великобританийе Совет Союзĕн таварĕсене тăратассине те тăтăшах ÿстерсе пыма кирлĕ майсене пурне те туса пачĕ. 1941 çулти августăн 16-мĕшĕнче тунă Килĕшÿ тăрăх Великобритания Совет Союзне 10 миллион кĕрепенке стерлинг кивçен панă, çавăнпа пĕрлех ун чухне çакна палăртнă пулнă: кивçен панă укçапа усă курнин сумми 10 миллион кĕрепенке стерлинга çити сывхарсан, Калаçса татăлакан Енсем çĕнĕ кредит тĕлĕшпе калаçăва кĕреççĕ.

Халыхи вăхăтра, Килĕшÿпе ăнăçлăн усă курнине пула, усă курнă кредитăн сумми 10 миллион кĕрепенке стерлинга çити сывхарса пырать, çак кунсенче вара Британи Правительстви Совет Правительствине малтанхи условисем тăрăхах çĕнĕрен 25 миллион кĕрепенке стерлинг кивçен пама йышăннă.

Британирен çар хатĕрĕсем тăратас ĕç валли укçа-тенкĕ парас тĕлĕшпе тунă Килĕшÿ тата 1941 çулти августăн 16-мĕшĕнче тунă Килĕшÿ тăрăх Великобритани Правительстви Совет Правительствине çĕнĕрен 25 миллион кĕрепенке стерлинг кивçен пани Британи енчен Совет Союзне вăрçă тата экономика тĕлĕшпе пулăшу памашкăн укçа-тенкĕн анлă никĕсне туса хурать.

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

МТС хăйĕн çурçулти планне 104,1 процент тултарчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 2-мĕш. (Телефонпа). Районри машинно-тракторнăй станци хăйĕн çурçулти ĕç планне июлĕн 1-мĕш тĕлне 104,1 процент пурнăçларĕ. МТС-ри 10 трактор бригадинчен 6-шĕ çурçулти плана ирттерсе тултарчĕç. Социализмлă ăмăртăва ĕçре анлăн сарса пырса, чылай трактористсем пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Хĕрача-трактористкăсен 7-мĕш, 9-мĕш, 2-мĕш номерлĕ бригадисем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. 7-мĕш номерлĕ трактор бригади хăйĕн çурçулти ĕç планне—132,8 процент, 9-мĕш бригада—128,4 процент, 2-мĕш бригада — 107,6 процент тултарчĕç. 7-мĕш бригадăра ĕçлекен Мария Соловьева, Иван Муллин, В. Ефремов, Гурий Львов трактористсем хăйсен çурçулти ĕç планне 130—150 процент пурнăçланă.

Çавăн пекех А. Малышева, Л. Самарина, Мария Атманова, Зина Соловьева трактористкăсем те çурçул планне чылаях ирттерсе тултарчĕç. Вĕсем куллен тăрăшса ĕçленипе, тракторсене вăхăтра тасатса, юсаса, сĕрсе тăнипе, МТС паянхи куна ирхи çĕртме планне 107 процент тултарчĕ.

МТС-ăн ремонт тăвакан бригадисенче те ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Июлĕн 1-мĕш тĕлне 16 комбайнран 10-шне юсаса пĕтернĕ, 13 мотор юсанă. Ремонт ĕçĕнче пĕрремĕшпе виççĕмĕш бригадăсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен çулталăкри ĕç планне 75 процент пурнăçланă.

Трактористсемпе трактористкăсен, комбайнерсемпе ремонт ĕçĕнче ĕçлекенсен татах та лайăхрах, ытларах ĕçлес кăмăлĕ ÿссе пырать.

А. ДОЛГОВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Планĕ пур, ĕçĕ çук

Канаш районĕнчи колхозсенче витнĕ итемсем, сушилкăсем тата авăнсем тăвас тата вĕсене юсас ĕç юлса пырать. Çакăн пирки ыйту парсан, райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ М. Лаптев кĕскен çапла ответлет:

— Планĕ пур та, ĕçĕ çук-ха,—тет вăл.

Чăнах та, райçĕрĕç пайĕ районри колхозсенче витнĕ итемсемпе сушилкăсем тата авăнсем юсамалли, вĕсене çĕнĕрен тумалли плана йышăннă. План тăрăх кăçал çĕнĕрен 5 сушилка тумалла, 25 колхозра амбарсемпе кĕлетсене тырă типĕтмелле туса майлаштармалла, 85 витнĕ итем, 9 сушилка юсамалла. Июлĕн 1-мĕш тĕлне çĕнĕ сушилкăсем пĕрре те туман, кĕлетсене те пăхса тухса дезинфекцилемен, витнĕ итемсемпе авăнсене те хăшпĕр колхозсенче кăна юсанă.

Райçĕрĕç пайĕ ку ĕçре колхозсене пачах та ертсе пымасть. Тунă плана халĕ те колхозсем патне çитермен. Пире Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕпе Тихонов юлташпа калаçма тĕл килчĕ. Райçĕрĕç пайĕн техник-строителĕ Кондратьев юлташ сĕтелĕнче выртакан план тăрăх ку колхозра çĕнĕрен пĕр сушилка тумалла пулнă. Анчах Тихонов юлташ кун çинчен нимĕн те пĕлмен. Çавăн пекех «2-ая пятилетка», «Красный путиловец», Йăлмачари «Майăн 1-мĕш» тата Кивĕ Шĕлттемри Сталин ячĕпе тăракан колхозсен руководителĕсем те хăйсен колхозĕсенче кăçал çĕнĕрен сушилкăсем тумалли çинчен пĕлмеççĕ. Çак ыйтăва вĕсен умне ку таранччен никам та лартман-ха, пĕлтермен. Çавăнпа ку тĕлĕшпе колхозсенче мĕн те пулин туни çинчен ыйтмалли те çук.

Тырăсене пухса кĕмелли вăхăт çывхарать. Ăна колхозсен тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илмелле. Кăçал çуркунне каярах юлса килнипе тырпулсене пухса кĕмелли вăхăт та каярах юлса килет, çавăнпа çак ĕçе тумалли срок та кĕске пулать. Çапла ĕнтĕ витнĕ итемсемпе сушилкăсене, авăнсене халех тасатса юсасси, вĕсене хатĕрлесси пысăк тата халех тумалли ĕç пулса тăрать. Çакна Канаш районĕнчи чылай колхозсен руководителĕсем шута илмен-ха, райçĕрĕç пайĕ хăй енчен колхозсене кирлĕ пек ертсе пымасть.

Доронин ячĕпе тăракан колхозăн витнĕ итемсем 3, вĕсенчен пĕрне çеç юсанă. Колхоз председателĕ И. Кузьмин юлташ ытти итемсен тăррисене кăçал вырнă ыраш кĕлтисемпе çеç витме шутлать. Таврара улăм темĕн чухлех пулсан та, итемсен тăррисене витме тăрăшмасть. Çавăн пекех «Комбайн», «Хĕрлĕ хĕм», «Ударник», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче те итемсем, авăнсем юсас ĕç сÿрĕккĕн пулса пырать. Киров ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Якимова юлташ витнĕ итемсем тума пачах та тăрăшмасть, аякран килсе пулăшассине шанса ларать.

Канаш районĕнче тырă вырмалли, утă çулмалли тата авăн çапмалли машинăсене юсас ĕç те, çавăн пекех транспорт инвентарĕсене юсас ĕç те япăх. Июнĕн 30-мĕш тĕлне районра утă çулмалли 46 машинăран 13-шне çеç, тырă вырмалли 112 машинăран 39-шне çеç юсанă. «Красный путиловец», «Мотор», «2-ая пятилетка», Ворошилов, Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче машинăсене юсама пачах та пытăнман.

П. НИКОЛАЕВ.
КАНАШ. (Хамăр корр.).

75 тонна çилос хывнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Янчеллă ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат хатĕрлет. Паянхи куна вăл 75 тонна силос хывнă. Ĕç малалла пырать.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Сурăхсене сăвас ĕç

ИШЛЕИ. Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхозра сурăхсене сăвас ĕç ăнăçлă пырать. Сăвакан сурăхсене скотницăсем пĕçернĕ сĕлĕпе тăрантараççĕ. Çакăн пек пăхнипе сурăхсем талăкне çурăшар литр сĕт паракан пулнă. Паянхи куна колхоз государствăна 32 литр сурăх сĕчĕ панă.

З. М.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Пирĕн войскăсем Курск енчи контратакисем

КУРСК ЕНĔ, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронтăн çак участокĕнче çапăçусем хаярланнăçемĕн хаярланса пыраççĕ. Фашистсем тĕрĕ вăйла техника тĕнчекăрчĕн çавтери пысăк çухату тусассăн, çапăçăва пирĕнсен çĕнĕ чăçсем хирĕçлеççĕ. Пирĕн боецсем нимĕç тапăнăвĕсем, авиаци тата пехотăн атакисене пĕрин хыççăн тепĕрне вăйлăраххăн сирсе-сирсе пăрахаççĕ. [illegible]

[illegible]

танксем сапаласа кайнă, вĕсенчен пĕр пайĕ пĕтнĕ.

Боецсемпе командирсем тата политработниксем хăйсен [illegible] тăшмана çапса аркатма [illegible]. Быков пулеметчик хăйĕн пулемечĕпе пунктăн хĕрринче хӳтĕнсе тăнă. Ку участокра тăшман уйрăмăнах вăйлăн кĕрсе килнĕ. Герой пулеметчик противникăн 18 салтакне тата 3 офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пĕр ротине пĕтĕмпех каялла хăваласа янă.

[illegible]

Комсорг Решников командир пулса [illegible]

[illegible]

Севастополе паттăррăн хӳтĕлени

Энер кунĕпех противникăн войскисем Севастополь патĕнче пирĕн позицисене хаяррăн атакăланă. Фашистла командовани çапăçăва каллех çĕнĕ резервсем кĕртнĕ, вĕсене танкăсемпе авиаципе пулăшса пынă. [illegible]

Нимĕçсем хула патне шатарса кĕме хăтланса пăхма чарăнмаççĕ-ха. Гитлерла генералсем нимĕнле çухатусем умĕнче те чарăнса тăмасăр çапăçма приказ илнĕ пулмалла. Юлашки икĕ эрне хушшинче нимĕçсен Севастополь патĕнче темиçе вуншар пин салтакпа офицер вилсе выртнă, танксем, орудисем нумай пĕтнĕ, [illegible]

Паян тинĕс пехотин пĕр чаçĕ кăна тăшманăн [illegible] атакине сирсе янă, противник çапăçу чухне 700 [illegible]

Пирĕн контратака вăхăтĕнче [illegible] тылай салтаксене [illegible] илнĕ. Вĕсем кăтартса панă тăрăх, Германин хăшпĕр полксенчен, чаннипе илсен, номерĕсем кăна тăрса юлнă.

Каç пулас умĕн Севастополь патĕнче çапăçу уйрăмăнах хĕрӳллĕн пулса пычĕ.

СЕВАСТОПОЛЬ, июнĕн 30-мĕш. («Известия» хаçатăн спецкорĕ).

Махорка промышленноçне чĕртавар çителĕклĕ парар

Чăваш республикинче махорка лартмалли çĕрĕн лаптăкне 60 процент ӳстернĕ. Пирĕн республикăра хăшпĕр районсемпе колхозсем махоркăна кăçал пуçласа лартаççĕ. Махорка вăл ĕçе юратакан культура, ăна кашни кунах лайăх пăхас пулать. Вăхăтĕнче лартсан, лайăх пăхсан, агротехника хушакан ĕçсене тусассăн — махоркăн тухăçĕ пысăк пулать, пирĕн махорка промышленноçĕ валли вара лайăх тата нумай чĕртавар пулать. Хĕрлĕ Çара, фронта табак çителĕклĕ парса тăма пулать.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара табак çителĕклĕ парса тăма пултăр тесе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăçалхи апрелĕн 4-мĕшĕнче колхозсемпе колхозниксем тата единоличниксем государствăна обязательнăй йĕркепе махорка памалли çинчен постановлени йышăннă.

Махоркăна обязательнăй йĕркепе таратмалли планран ирттерсе паракан колхозсемпе колхозниксем тата единоличниксем çав планран ирттерсе паракан махоркăна обязательнăй йĕркепе памалли тĕштырă шутне кĕртме пултараççĕ. 10 килограмм махорка çакăн чухлĕ тĕштырă вырăнне каять: пĕрремĕш сортли — 15 килограмм тĕштырă вырăнне, иккĕмĕш сортли—11 килограмм тĕштырă вырăнне, виççĕмĕш сортли — 5—7 килограмм тĕштырă вырăнне каять. Кунсăр пуçне тата махоркăна обязательнăй йĕркепе памалли планран 10 процент таран ӳстерсе парсан — çав ӳстерсе панă табакăн хакĕ 50 процент ӳсет, 10 процентран пуçласа 25 процента çити ӳстерсе парсан—хакĕ 100 процент ӳсет, 25 процентран ытла ӳстерсе парсан—хакĕ 200 процент таран ӳсет.

1942 çулти августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа пĕрремĕшпе иккĕмĕш сортлă махоркăн хакĕ 25 процент, виççĕмĕш сортлин хакĕ 35 процент ӳсет. Пĕрремĕш «АС» сортăн пĕр тонни 830 тенкĕ тăнă, çĕнĕ хакĕ унăн 1.037 тенкĕ те 50 пус пулать, иккĕмĕш сортăн хакĕ 610 тенкĕ вырăнне 762 тенкĕ те 50 пус пулать, виççĕмĕш сортăн хакĕ 299 тенкĕ вырăнне 391 тенкĕ те 50 пус пулать. Семеновка йышши махоркăн хакĕсем çакăн пек пулаççĕ: пĕрремĕш сортăн хакĕ (тонна махоркăн хакĕ) 996 тенкĕ вырăнне 1.245 тенкĕ, иккĕмĕш сортăн — 732 тенкĕ вырăнне 915 тенкĕ, виççĕмĕш сортăн — 348 тенкĕ вырăнне 469 тенкĕ те 80 пус пулать.

Пĕрремĕш сортне планран 10 процент таран ирттерсе парсан, çав ирттерсе панă махоркăн пĕрремĕш сорчĕн хакĕ 1.566 тенкĕ те 25 пус, иккĕмĕш сорчĕн хакĕ — 1.143 тенкĕ те 75 пус, виççĕмĕш сорчĕн хакĕ — 587 тенкĕ те 25 пус пулать. Планран 10 процентран 25 процент таран ӳстерсе парсан, пĕрремĕш сортăн хакĕ 2.075 тенкĕ, иккĕмĕш сортăн—1.525 тенкĕ, виççĕмĕш сортăн—783 тенкĕ пулать. Планран 25 процент ытла ӳстерсе парсан, пĕрремĕш сортăн хакĕ 3.112 тенкĕ те 50 пус, иккĕмĕш сортăн — 2.287 тенкĕ те 50 пус, виççĕмĕш сортăн — 1.174 тенкĕ те 50 пус пулать.

Чăваш республикинче çĕр махорка лартма питех те лайăх. Махорка ăнса пултăр тесен, çĕре кашни çумăр çунă хыççăн çемçетес пулать. Çĕре çемçетсе тăрсассăн, махоркăна чир тавраш ермест. Тата махоркăн аялти çулçисене тасатса тăрас пулать. Тасатнă çулçăсене тата табакăн тăррисене (чечексемсĕр пуçне) пухса типĕтес пулать. Çапла тусассăн кашни гектартан тата 3—4 шар центнер махорка пухма пулать. Типĕтнĕ çулçăсене тата тăррисене государствăна панă чухне вĕсене виççĕмĕш сортăн хакĕпе илеççĕ. Çак йышши чĕртавара государствăна çулçăсене типĕтсенех августра памалли план шучĕпе парас пулать.

Махоркăна пухса кĕртме халех хатĕрленес пулать. Колхозсен председателĕсен махорка типĕтме сарайсем, çивиттисем, шертесем. тата çыхмалли материал (мунчала) хатĕрлесе курас пулать.

Государствăна махорка обязательнăй йĕркепе ноябрĕн 1-мĕшчен парса татмалла.

ЛЬВОВ,
Главтабакăн Чăваш республикинчи конторин управляющийĕ.

Çамрăк стахановец

Иван Прокопьев кăçал вунсаккăра кайрĕ. Унăн икĕ пиччĕшĕ отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче гитлерла захватчиксене хирĕç çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çар ретне каяччен вĕсем Çĕмĕрле комбинатĕнче столярсем пулса ĕçленĕ.

Иван Прокопьев та пиччĕшĕсен профессине юратнă. Иртнĕ çулти кĕркунне вăл Çĕмĕрле комбинатне ĕçе кĕме пырсан тӳрех çапла каланă:

— Манăн пиччесем столярсем пулнă. Эпĕ те вĕсен специальноçне юрататăп, — тенĕ.

Çак кунтан пуçласа вăл комбинатăн пĕр цехĕнче столяр ĕçне вĕренме тытăннă. Ун çумне мастера Грачев юлташа çирĕплетнĕ.

Çамрăк рабочи малтанхи кунсенчех хăйĕн хастарлăхне кăтартнă. Вăл мастер вĕрентнине пысăк тимлĕхпе итленĕ, часах инструментсене те вĕренсе çитнĕ. Вăхăт нумаях та иртмен, Прокопьев хăй тĕллĕнех чертежсем вулама пуçланă. Ку вара мастера та хытах хавхалантарнă.

— Пултарулла ача, каланисене хăвărттăн ăса хывать, — тенĕ вăл цех начальникне, хăйĕн ученикĕн пултарулăхне хакласа.

Иккĕмĕш уйăхĕнче Прокопьев юлташ чертежсем тăрăх хăй тĕллĕнех заказсем тума пуçланă.

...Хальхи вăхăтра Прокопьев юлташ цехра чи ответлă заказсенчен пĕрне тунă çĕрте ĕçлет. Кашни кун икшер норма памалла! — çакăн пек лозунг лартнă вăл хăй умне. Ăна вăл тивĕçлĕн пурнăçласа пырать. Акă результатсем: апрель уйăхĕн программине вăл 157 процент тултарнă пулсан, май уйăхĕнче нормăна, вăтамран илсен, кашни кун 215 процент тултарса ĕçленĕ. Июнь уйăхĕнчи результатсем тата лайăхрах: июнĕн малтанхи вунă кунĕнче куллен 2,3—2,5 норма туса пынă. Унăн ĕçĕнче простой та, брак та пулмасть.

Çак кунсенче Прокопьев юлташ технологи процесне урăхлатса çĕнетес тĕллĕпе рационализациллĕ сĕнӳ панă. Вăл сĕнӳ малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, пысăк экономи пама пултарать. Сĕнĕве пурнăçлани ĕç тухăçлăхне икĕ хут ӳстерме пулăшать, урăхла каласан — икĕ çын тумалли ĕçе апла пĕр çынах ĕлкĕрсе пыма пултарать.

Çамрăк стахановец Прокопьев, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, икĕ çын туса пымалли ĕçе пĕччен туса пыма обязательство илнĕ. Хастарлă патриот хăйĕн сăмахне тивĕçлĕн пурнăçласа пырать.

Х. ЛИСИН.



АНГЛИН ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ. Укерчĕк çинче: Вăтаçĕр тинĕс çинче хурала çӳрекен карапсем.

Гитлерла Германи Франције çаратни

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Пэтен пĕлтĕр перемири тунă хыççăн, 1940 çулти июньрен пуçласа 1941 çулти май уйăхĕччен, Франция Германие «оккупациллĕ çара тăрантарса усрамашкăн» куллен 400 миллион франк тӳлесе тăнă. Германия, чăннипе, оккупациллĕ çар валли кунне 125 миллион франкран ытла расходламан. Çапла вара, кашни кун 275 миллион франк гитлерла кыснана çаратуллă «таса» контрибуци пек пырса кĕрсе тăнă. Çав контрибуцин пĕр пайне Францин банкĕсемпе промышленность предприятийĕсен акцийĕсене илес ĕçе янă. 1941 çулти майра Дарлан Германие ютçĕршывсен хаклă хучĕсене, Францин банкĕсенче выртнăскерсене, 5 миллион ылттăн франк чухлĕ панă. Çавăн пек «парне» панăшăн нимĕçсем Виши правительствине оккупациллĕ çара усрама паракан укçа хисепне кунне 300 миллион франк таран чакарма ирĕк панă.

Франције укçа тĕлĕшĕнчен çаратнипе пĕрлех Германи капиталĕ Франци промышленноçне хăвăрттăн «кĕрсе вырнаçса пынă». 1941 çулти декабрьте Францин сăрă промышленноçĕн тĕп предприятийĕсене, вăл шутра Сен-Денири «Кюльман» завочĕсене те, «Франколор» ятлă картеле пĕрлештернĕ, çав картелĕн акцийĕсенчен 51 процентне нимĕçсен химе промышленноçĕнчи «И. Г. Фарбениндустри» ятлă фирма «илнĕ» Францин пир-авăр промышленноçĕнчи пысăк 20 предприяти те «пĕрлешнĕ», вĕсем «Франц Рейон» ятлă картель тунă, вăл картеле нимĕçсем контрольлесе тăраççĕ. «Герман Геринг-Верке» ятлă концерн Францири «Шнейдер-Крезо» завочĕсене нумайĕшне хăй валли илнĕ.

Нимĕçсен темиçе банкĕ французсен тĕрлĕ предприятийĕсене укçа кивçен парса тăма тата вĕсен акцийĕсене илме Франциире хăйсен агентствисемпе отделенийĕсене уçнă.

Эльзаспа Лотарингире гитлеровецсем «ариец мар çынсен» аллинче тăракан мĕнпур банксен конторисене тата промышленность предприятийĕсене конфискациленĕ, ютçĕршывсен предприятийĕсене вара анлăн контрольлесе тăраççĕ. Эльзаспа Лотарингири металлурги промышленноçне пĕтĕмпех нимĕçсем тытса илнĕ.

Нимĕçсем Франци промышленноçĕн хăйсен вăрçă ĕçĕсем валли кирлĕ отраслĕсенче çавăн пек хăтланаççĕ. Франци промышленноçĕн ытти отраслĕсенче вĕсем предприятисене чĕртаварсăр, топливăсăр тата кивçен укçасăр хăварса, вĕсене ирĕксĕрлесе хупаççĕ. Çав хупнă предприятисенчи рабочисене вара Германири предприятисене каторгăлла ĕçе яраççĕ.

Америка бомбардировщикĕсем Румыни çине вĕçсе пыни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 29-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Стамбулран пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 12-мĕшĕнче Румынири нефтепромыслăсем çине вĕçсе пырса тапăннă бомбардировщиксем Германин 4 самолетне персе ӳкернĕ, Плоэшти тата Бузау хулисем патĕнчи чугунçул станцийĕсемпе чугунçул линине сиенленĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРНИСЕМ

ЖЕНЕВА, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Прагăри радио пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 28-мĕшпе 29-мĕшĕнче Прагăра тата Брно хулинче 82 чех çыннине персе вĕлернĕ. Персе пăрахнисен пурлăхĕсене туртса илнĕ.

Гейдрих çине тапăннă вăхăтран пуçласа Чехословакире пĕтĕмпе 914 çынна асаплантарса вĕлернĕ, Чехословакири çунтарса янă икĕ ялта вилнĕ çынсем ку шута кĕмеççĕ.

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эль-Аламейнран хĕвеланăçнерехри районра Англипе Германин тĕп бронетанковăй вăйĕсем хушшинче июлĕн 1-мĕшĕнче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă (Эль-Аламейн вăл Энд-Дабаран хĕвелтухăçнелле 60 километрта ларать).

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ, Египетра Англин 8-мĕш армийĕпе пĕрле куçса çӳрекенскер, çапла каласа парать: ĕнерхи çапăçусем çинчен тĕплĕн пĕлтерекен даннăйсем çукха, çапах та çакă паллă: противник, хĕвелтухăçнелле тинĕс хĕррипе пырса, Эд-Дабаран иртсе кайнă ĕнтĕ. Империн войскисем противника хирĕç çапăçаççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра çапăçусем Александрийăран хĕвеланăçнелле выртакан 200 километртан та çывăхрах районра сарăлса кайнă. Çапăçу питех те хаяррăн пулса пырать, хăшпĕр чухне штык вĕççĕн тăрса çапăçаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ĂМАРТУРА

ВĂРНАР. Районри нумай колхозсем, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартма пуçларĕç. Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» тата Çĕн Алтăшри «Волга» колхозсем иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе пысăк тупăшсем илнĕ.

— Кăçалхи çул, — теççĕ Çĕн Алтăш колхозĕнчи колхозниксем,—иртнĕ çулхинчен начар ĕçлеме нимĕнле сăлтав та çук, мĕншĕн тесен эпир хамăр мĕнле вăхăтра пурăннине тата эпир туса илекен пысăк тухăçлă тырпул ирсĕр тăшмана хăвăртрах çапса аркатма пулăшнине нимĕнрен те аванрах пĕлсе тăратпăр. Эпир иртнĕ çул та гектартан тырпула 100 пăтран кая мар туса илнĕ, кăçал вара 120-шер пăт илетпĕрех.

Вата колхозник Иван Карпов çапла калать:

— Эпĕ хамăн ывăлăмсем киле çĕнтерсе таврăнассине кĕтсе ĕçлетĕп,—тет.

Иван Карпов вата пулин те июнĕн 15-мĕш тĕлне обязательнăй йĕркепе тумалли ĕç минимумне икĕ хут ирттерсе пурнăçланă. Ун пек колхозниксем татах та пур. Комсомолец А. Данилов пĕр май уйăхĕнче кăна 56 ĕçкунĕ тунă, ытти уйăхсенчисене те шута илсен, унăн кăçал 89 ĕçкунĕнчен иртнĕ. Çавăн пекех Н. Сергеев, С. Васильев, Т. Васильев, М. Порфирьев, А. Арсентьева, В. Васильева, С. Михайлова тата ытти нумай колхозниксем те обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне икшер хут ирттерсе тултарнă.

Халĕ колхозра хĕрӳллĕ ĕç пырать. Кашни çын, пĕчĕккинчен пуçласа ваттине çитиччченех, куллен, пĕр сехет вăхăта сая ямасăр, хирте, çум çумланă çĕрте, ĕçлет. К. Николаев бригадир пулса ĕçлекен 3-мĕш бригадăри колхозниксем 1-мĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлеççĕ. Икĕ бригади те тырăсене пĕр çумкурăкĕ юлмиччен тасатма пулчĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах шкул ачисем пысăк пулăшу параççĕ. Шкул ачисем хăйсем умне 70 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илме задача лартнă. Çум çумланă çĕрте тата ытти ĕçсенче те шкул ачисем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре акнă тырăсене лайăх пăхни, вĕсене вăхăтра апатлантарса тăни питех те усăллă пулнине Кĕçĕн Кипек колхозникĕсем аван пĕлеççĕ. Паянхи куна акнă çуртырисен площадĕнчен 91 процентне тĕрлĕ минерал çăнăхĕсемпе апатлантарнă. Ку ĕçре уйрăмăнах яровизатор К. Николаев лайăх кăтартусем парса пырать.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнчи ăмăртура «Память Ленина» колхоз тырпула пухса кĕртсе капана хывас тата авăн çапас тĕлĕшпе чылаях вăраха юлса ĕçлени палăрнă. Çакă вара тырпул тухăçлăхне чакарнă тата нумай тăккаланчăксем кӳнĕ. Кăçал колхозниксем, хăйсен социализмлă ăмăрту договорне алă пусса çирĕплетнĕ чухне, çакăн çинчен уйрăмăнах тĕплĕн асăрхаттарса кăварчĕç. Кăçал колхозсем пĕтĕм тырпула уйăхиртен 19 ĕçкунĕ хушшинче пухса кĕртме обязательство илнĕ.

Ку тĕлĕшпе Çĕн Алтăшри «Волга» колхоз сахал мар ĕçсем тунă та ĕнтĕ. Кунта тырă çулмалли çавасене, çурласене хатĕрленĕ, машинăсене юсаса çитерпĕнĕпе пĕрех.

Анчах çакна та каламалла. Икĕ колхозĕнче те социализмлă ăмăртăва пур колхозниксене те мар-ха хутшăнтарнă. «Память Ленина» колхозри хăшпĕр колхозницăсем ним сăлтавсăрах ĕçрен пăрăнса çӳреççĕ. Сăмахран, М. Васильевăна тата унăн аппăшне И. Васильевăна илер. Вăйпитти хĕрарăмсемех июнĕн 15-мĕш тĕлне вĕсем пурĕ те 4,97 ĕçкунĕ çеç тунă, П. Краснова, Е. Иванова колхозницăсем тата пĕр ĕçкунĕ те туман.

Çакнашкал фактсем юнашар колхозра та пур. Пысăк тухăçлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва çак çынсене те хутшăнтарас тесен, паллах, колхозсенчи агитаторсен, беседчиксен пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Анчах ку енĕпе тумалли ĕçсем нумай-ха.

«Волга» колхозра агитаторсенчен С. Федоров аван ĕçлет, анчах Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕ уйăрса панă учительсенчен хăшпĕрисем (Р. Тепловская, Н. Щукин) нимĕнле ĕç те туман. Çакнашкал тĕслĕхсем «Память Ленина» колхозра та пур. Кунта стена хаçатне вăхăтра кăлармаççĕ.

Агитаципе ăнлантарулла ĕçе йĕркелесси — партипе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан çивĕч задачăсенчен пĕри. Анчах ăмăртăва икĕ колхозри комсомол организацийĕсем те тивĕçлипех хутшăнман-ха.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ЧУВАШМЕТРОВЕС

заключает договора с организациями на ремонт, технадзор и установку крупных весоизмерительных приборов.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

3—3

ТРЕБУЮТСЯ:

управделами-машинистка, слесаря-монтажники, слесаря и механики по автоделу, агенты в отдел снабжения, старший бухгалтер в торговый отдел и строительные рабочие всех профессий.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Чапаевский рабочий поселок, отдел кадров. Тел. 0-26.

ЧУВАШПРОМСТРАХКАССЕ

требуются: инспектор охраны труда и техники безопасности, старший орг. инспектор, знакомые с работой по страхованию в системе промкооперации.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом № 21, здание промартели Кожупряжь.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ — пегая кобыла с белой полосой через спину на живот, по носу проточина с переходом на левую ноздрю.

О местонахождении просьба сообщить по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская, 45.

ПРОПАЛА КОБЫЛА, вороной масти, рождения 1935 года, на ноздрях белая точка, левая задняя нога в чулках, грива направо.

Знающих местонахождение просим сообщить по адресу: Чувашская АССР, Ишлейский район, Анат-Кинярский сельсовет, правлению Анат-Кинярского колхоза «Прожектор».

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗема РСФСР

ОБ"ЯВЛЯЕТ

прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений

Гидротехническое отделение готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы), осушению заболоченных земель, орошению земель, искусственному дождеванию, мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций для колхозов, совхозов и МТС.

Землеустроительное отделение готовит техников-землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по горизонтальной и вертикальной с'емке (теодолитная, мензульная и производство невелировки) для составления сельскохозяйственной карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования и строительства промышленных и жилых сооружений, отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Лица в возрасте от 15 до 35 лет, желающие поступить в техникум, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: Мар-Посад, Чувашской АССР, ул. Ленина, 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 25 августа сего года с документами: 1) об образовании, 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографии, 5) 2 фотографические карточки.

Окончившие в 1941 и 1942 г. неполную среднюю школу, 8-й, 9-й и 10-й классы средней школы принимаются на 1-й курс техникума без испытаний. Без испытаний принимаются также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже семи классов неполной средней школы, независимо от времени ее окончания, а все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям с 25 по 30 августа по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР—в об'еме программы неполной средней школы.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями.

Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками «отлично», будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1942 года.

4—2. ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 868 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.